22-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 МАРТ 27 ЭРНЕКУН 72(6097) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

33. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ **К. С. Семенов** юлташ). Колхоз çуракине хатĕрленнĕ май уя 1281 тонна тислĕк кăларса тăкнă, 61 центнер кĕл, 6 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Çуракинче кирлĕ вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе сортласа хунă. Вăрлăхлăх пăрçана пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа илсе сортланă. Кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсанă, кашни лашан хăйĕн уйрăм кӳлмелли хатĕрсем пур. Лашасем пурте лайăх, мăнтăр.

34. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркасси ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ В. Павлов юлташ. Павлов юлташăн бригади агротехмероприятисен планне вăхăтра тата ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ, ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарьне пĕтĕмĕшпех юсаса пĕтернĕ, лайăх хатĕрлесе хунă.

35. Василий Григорьевич Ямщиков— Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕнчи тракторист. Ямщиков юлташ хăй ĕçлемелли трактора срокчен юсаса пĕтернĕ, кун хыççăн вăл тата 2 трактор юсаса панă. Хальхи вăхăтра Ямщиков юлташ ытти трактористсене тракторсем юсас ĕçре куллен пулăшса пырать.

Агрономăн пултарулă организатор пулмалла

Отечественнăй аслă вăрçă ялхуçалăх умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Тырпул, аш-какай, сĕт-çу, пахча-çимĕç ытларах туса памалла, промышленность валли чĕртавар ытларах тумалла, — çакăн пек халĕ фронтăн, çĕршывăн заказĕ. Тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе çĕнтерӳ тума колхозсен фронта çавăн пек пулăшу памалла. Фронта, çĕршыва панă пахча-çимĕç, çĕрулми, аш-какай, тырпул — нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрекен снарядсем пекех кирлĕ. Вĕсемсĕр пирĕн герой-боецсем тăшмана çĕмĕрсе çĕнтерӳ тума пултараймаççĕ.

1942 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илес тĕп задача кашни колховăн, ялхуçалăхĕнчи кашни работникăн ĕçри ответлăхне нумай хут ӳстерет. Пирĕн республикăри колхозсем кăçал государствăран пысăк заказ илчĕç, вăл заказ — фронт заказĕ, вăл пĕтĕмĕшпех тăван çĕршывăн интересĕсенчен тухса тăрать, çавăнпа ăна хăвăрт та тĕплĕн пурнăçласа пымалла. Пирĕн кăçал, вăтам шутпа илсен, кашни гектартан 13-шер центнер тĕштырă туса илмелле, çĕрулми лартнă çĕр лаптăкне 31 процента яхăн ӳстермелле, пахча-çимĕçсене 418 гектар ытларах лартса тумалла, йĕтĕн тата кантăр акнă çĕр лаптăкĕ 38 процент ытла ӳсмелле, махорка лартса тăвас ĕç, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытла пысăкланмалла. Кунсăр пуçне пирĕн кăçал хамăрăн уйхирсене çĕнĕ культурăсене кĕртмелле, кок-сагыз, эмел курăкĕсем, сахăр кăшманĕ тата ытти те акса ӳстермелле.

Çак задачăсене пурнăçланă çĕрте агрономсен ĕçĕ пысăк тата ответлă вырăн йышăнса тăрать. Агрономи науки халĕ нихăçанхинчен çӳллĕ пусăма çĕкленмелле. Пĕтĕм вăйа колхозсене практикăлла пулăшу парасси çине ямалла. Çуракине хатĕрленнĕ тата ăна иртнерĕ вăхăтра агротехникăлла мероприятисене тĕрĕс пурнăçласа пырассишĕн нумай хут ытларах вăй хурса ĕçлемелле.

Нумай агрономсем ĕç фронтĕнчен çапăçу фронтне, тăван çĕршыва нимĕç оккупанчĕсенчен тасатассишĕн çапăçма кайрĕç. Вĕсем алла хĕçпăшал илсе тăван çĕршыва, пирĕн ĕçе сыхлаççĕ. Ĕç фронтĕнчи агрономсен, хăйсен ĕçне тухăçлăрах туса, фронта кайнă агрономсен вырăнĕсене йышăнмалла, колхозсене пулăшассине вăйлатмалла. Халĕ колхозсене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем тăнă май агрономсен ĕçри ответлăхĕ нумай хут пысăкланать. Колхозсен çĕнĕ руководителĕсене агротехника пĕлĕвне памалла, колхозсен социализмлă хуçалăхне ертсе пыма, агротехникăлла мероприятисене тĕрĕс пурнăçлама вĕрентмелле.

Агрономсен ĕçĕн меточĕ халĕ тĕпрех улшăнать. Иртнĕ çулсенче, çĕршывра мирлĕ строительство пынă вăхăтра, хăшпĕр чухне агрономиллĕ сĕнӳсем панипех ĕç ăнăçлăн пулса пынă пулсан, вăл сĕнӳсене опытлă председательсем агроном енчен ĕçлĕ пулăшу памасăрах пурнăçлама пултарнă пулсан, халĕ ĕнтĕ çакăн пек сĕнӳ пани çителĕксĕр пулать. Агроном хăйĕн ĕçне иртнĕ çулсенчи пек сĕнӳсем парса çеç туса пырать пулсан, вăл усăсăр ĕçлет. Унăн ĕçĕн результачĕсем вара, паллах, начар пулаççĕ. Агрономсем колхозсене практикăлла ĕçре пулăшса пымалла. Агроном хăйне ĕçлеме уйăрса панă кашни колхозăн хуçалăхĕпе тĕплĕн паллашмалла, унта ĕçлекен руководительсене лайăх пĕлсе тăмалла, колхоз правленине производствăлла тата календарнăй плансем тунă çĕрте пулăшмалла, çураки вăхăтĕнчи ĕçсен графикне тумалла. Çынсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса пур ĕçсене те ăнăçлăн пурнăçламалла тăвас пулать, ĕç хăй тĕллĕн пырасси çине шан[illegible]

[illegible]

организацилемелле. Агроном хушнă ĕçсене колхоз ăнăçлăн пурнăçлама тытăнсан, ăна пурнăçласа çитерессине шанма май пулсан çеç агроном колхозран кайма пултарать. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, агрономсем ĕçре пултарулă организаторсем пулса тăмалла.

Нумай агрономсем хăйсен ĕçне тĕрĕс ăнланса, колхозсене çирĕп пулăшу парса ĕçлеççĕ. Вăрмар районĕнчи «Мурат» райсемхоз агрономĕн Афанасьев юлташăн ĕçне мухтама тивĕçлĕ. Вăл ĕçленĕ куçалăх 1941 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра парса татрĕ, колхоз çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕ, хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Афанасьев юлташ халĕ Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕ.

Хĕрлĕ Чутай райçĕрĕç пайĕн агрономĕ Иванов юлташ та хăйĕн ĕçне начар мар туса пырать. 1941 çулта вăл ĕçleме пуçласан, районра агрономиллĕ ĕç чылай лайăхланчĕ, колхозсем агротехникăлла мероприятисене лайăхрах пурнăçлама тытăнчĕç. Чкаловски районри райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Архипов юлташ та хăйĕн ĕçне пĕлсе, активлăн туса пырать.

Анчах та пирĕн агрономсем хăйсен умĕнчи пысăк задачăсене пурте пĕр пек ăнланса илмен-ха, час-часах ĕçе ячĕшĕн кăна туса пыракан агрономсем те пур. Вĕсем колхозсене тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ, колхозсен ĕçне витĕрех курса тăма тăрăшмаççĕ, çавăнпа колхозсенчи пысăк çитменлĕхсене, тепĕр чух кирлĕ ĕçсене те курмасăр иртсе каяççĕ.

Куславкка райçĕрĕç пайĕ Ковалева агронома «Коммунар» колхозра 1942 çулти çураки планне ăнлантарса пама тата ăна пурнăçлама тытăнассине организацилеме хушнă. Унăн колхозăн производствăлла планне тума та пулăшмалла пулнă. Анчах Ковалева юлташ райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ парса янă çырусене колхоз председательне панипех хăйĕн ĕçне вĕçленĕ.

Çапла вара Ковалева юлташ хăйĕн ĕçĕ çине чунсăррăн пăхнă пирки, колхоз правленийĕ районри совет исполкомĕ çирĕплетнĕ плана ăнланман, ăна обязательнăй йĕркепе пурнăçлама кирлине туйса илмен. Çакă вăл январĕн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ; мартăн 8-мĕшĕччене кун çинчен райçĕрĕç пайĕ нимĕн те пĕлмен.

Ĕç çине çакăн пек пăхни колхозсенче йĕркесĕрлĕхсене сарăлма май парать. Çапла, Куславкка районĕнчи «Заря» колхозра учет ĕçне пăтраштарса янă. Тырă тухăçне кирлĕ пек учета илмен. Бухгалтер кĕнеки тăрăх тулă 97 центнер тухнă тесе приходланă. Документсем тăрăх тĕрĕсленĕ хыççăн 154 центнер тухни палăрнă. Çак колхозра агрономсем пĕрре çеç мар пулнă, анчах ĕçпе тĕплĕн интересленмен, çитменлĕхсене курмасăр иртсе кайнă. Хăшпĕр агрономсем колхозсене пырсан колхоз агротехникăлла мероприятисене мĕнле пурнăçласа пынипе те интересленмеççĕ. Тĕслĕхрен, пухнă тислĕк мĕнле упранса тăнине, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас ĕçе мĕнле организациленине тата минераллă удобренисене турттарса килнине тĕрĕслемеççĕ.

Ĕç çине çапла çиелтен пăхассине пĕтермелле. Çуракине хатĕрленесси халĕ калама çук пысăк ĕç пулса тăрать. Вăл ĕçе ăнăçлăн тунинчен ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсене пысăк пахалăхпа ирттересси килет. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсем промышленноçри ĕçсемпе пĕр виçерех тăнине, вăл ĕçрен нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкса çĕнтерӳ тăвасси ăнăçлăхĕ килсе тăнине агрономсен тивĕçлĕн ăнланмалла. Агрономсем, вăрçă фронтĕнчи командирсем пек, ялхуçалăх [illegible]

[illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 25-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Тĕплĕн шута илнĕ тăрăх, мартăн 23-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 31 самолет мар, 37 самолет пĕтерсе тăкнă.

Мартăн 24-мĕшĕнче противникăн 27 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 9 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 24-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсенне 15 танк, пĕр бронемашина, 50 оруди, зенитнăй пулеметсен 19 точкине, 13 миномет, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 80 автомашинăна яхăн, боеприпассем тиенĕ 11 лава, радиостанци, чугунçул çинчи 14 вагона тата 9 паровоза пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсене хирĕç нимĕçсем хăйсен пехотин пысăк соединенине кĕртсе янă, çав соединение вĕсем танксемпе, авиаципе пулăшса пынă. Вăйлă çапăçусем икĕ кун хушши пынă. Противникăн пур контратакисене те, ăна пысăк çухатусем кӳрсе, каялла сирсе пăрахнă. Çапăçу хирне тăшманăн çĕршер виллисем выртса юлнă. Нимĕçсен икĕ танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, нимĕçсен контратакине сирсе пăрахса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 930 çынна пĕтерсе тăкнă тата малалла куçнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен икĕ орудине, пулеметсен 6 точкине, 3 минометне тата горючи тултарнă автоцистернине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 125 вилли выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче мартăн 23-мĕшĕнче нимĕçсен «Юнкерс-38» йышши 8 бомбардировщикĕ, хăйсен истребителĕсем хӳтĕлесе пынипе, совет стрелковăй чаçĕсенчен пĕрин çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахма хăтланнă. Пирĕн боецсем, пăшалсенчен пеме пуçласа, тăшманăн виçĕ самолетне вут тивертнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнчи пирĕн подразделенисенчен пĕринчи зенитчиксем юлашки икĕ кун хушшинче нимĕçсен 4 бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Кильбург юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллери батарейине тăшманăн 8 танкĕ атакăланă. Артиллеристсем тӳррĕн персе икĕ танка пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ытти танкĕсем каялла çаврăнса тарнă.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансем нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене пулăшса пыраççĕ. Çак кунсенче нимĕçсем совет войскисен тылне кĕртсе яма хăйсен пехотин батальонне хатĕрленĕ пулнă. Фронт патне каякан çул çинче тăшманăн батальонне кĕтмен çĕртен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен пысăк отрячĕ атакăланă. Çапăçу нумай вăхăта пыман. Çав çапăçура гитлеровецсене сапаласа янă. Çул çинче тăшманăн виллисем нумай выртса юлнă. Партизансем пысăк трофейăсем тытса илнĕ. Çак облаçри партизансен тепĕр отрячĕ, К. ялĕ çине тапăнса, нимĕçсен гарнизонне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕн 21-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Гергард Бределув çапла каласа панă: «Пирĕн питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ дивизие февраль уйăхĕнче çынсем хушса пачĕç. Çĕнĕрен килнĕ çынсем хушшинче — пуринчен ытларах 30 çултан пуçласа 45 çула çитиччен резервистсем. Çаксем вĕсем вăрçă ĕçне вĕренмен салтаксем, вĕсем хĕçпăшалпа усă курма пĕлмеççĕ. Германи çарĕ каялла чакма пуçланăранпа дисциплина питĕ япăхса кайрĕ. Эпĕ çакнашкал ĕç çинчен пĕлетĕп. Захарово ялĕнче тăнă чухне офицер 6 салтака разведкăна кайма хушрĕ. Тарăн юр тăрăх кайма май çук тесе, салтаксем офицерăн çав приказне пурнăçа кĕртме килĕшмерĕç. Çав салтаксене пурне те арестлесе тыла илсе кайрĕç».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Слободка ялĕнчен каялла чакса кайнă чухне нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Н. И. Фомичев çуртĕнче 20 колхознике çунтарса янă. Çунса кайнисем хушшинче çаксем пур: 45 çулти В. И. Фомичева, унăн хĕрĕсем Марийăпа Екатерина — 18—20 çултискерсем, унăн ывăлĕсем: 12 çулти Иван, 7 çулти Василий, пĕр çулти Анатолий; 10 çулти П. С. Семенов, унăн хĕрĕсем: 18 çулти Екатерина, 11 çулти Перасковья, 5 çулти Анна, 2 çулти ывăлĕ Василий тата ыттисем те. Нимĕçсем ялти 218 çуртран 188 çурта çунтарса янă.

* * *

Польша территорийĕнче Розвадув хули районĕнче икĕ уйăх хушши ĕнтĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен тарнă нимĕç салтакĕсен пысăк отрячĕ çапăçать. Отряд пулеметсемпе тата автоматсемпе хĕçпăшалланнă. Çак отрядри салтаксем Гитлер çарĕн апат-çимĕçпе тĕрлĕрен япаласем усракан склачĕсем çине тапăнаççĕ.

* * *

«Красное Сормово» заводĕнчи стахановецсем Кузин, Коновалов тата Сухин юлташсем, фронт валли васкавлă задани илсе, ăна норма тăрăх пăхнинчен 4 хут хăвăртрах пурнăçа кĕртнĕ.

Мартăн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 26-мĕш ыран тенĕ чух фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн 20 ДЗОТ-ĕпе блиндажĕсене çĕмĕрнĕ тата 12 пулеметне, 4 минометне пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 5 оруди, 72 пулемет, 12 миномет, винтовкăсем, автоматсем, 4 радиостанци, 33 ещĕк мина, 13 ещĕк тар, куçса çӳрекен 5 кухня тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе çар пурлăхĕсем. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем, вилнисене шутласан кăна, 1.800 çын пĕтнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн стрелковăй часть йышăнса илнĕ пункта каялла тавăрас тесе, нимĕçсем çапăçăва пĕр батальона çити кĕртсе янă. Ӳсĕр гитлеровецсем пĕтĕм пĕвĕпе тăрса атакăна кĕнĕ. Боецсем нимĕçсене çывăха янă та пулеметсемпе автоматсенчен пĕр харăссăн пеме

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Хĕрлĕ Çарăн Гвардейски минометнăй чаçĕсен личнăй составне наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, кадрсене çапăçма хатĕрлес ĕçре тата действующи армие çапăçура пиçĕхтерес, ун валли çителĕклĕ боеприпассем тăратас тĕлĕшпе уйрăмах кăтартуллă ĕçленĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — полковой комиссара **А. А. Абрамова**, дивизионнăй комиссара **П. А. Дегтярова**, майора **М. Н. Коротуна**, красноармееца **А. К. Подольские**, бригаднăй комиссара **Е. Ф. Шумилина** тата подполковника **Б. А. Юсупова**.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — артиллерин генерал-майорне **В. В. Аборенкова**, бригаднăй комиссара **Ф. Н. Жукова**, майора **В. В. Мишина**, Совет Союзĕн Геройне генерал-майора **С. Ф. Ниловские**, красноармееца **И. В. Полетайкина** тата ыттисене те, пурĕ 19 çынна.

ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР орденĕпе—32 çынна, **«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе** — 18 çынна наградăланă. (ТАСС).

Куйбышев ячĕпе тăракан тата Уралэлектроаппаратăн 38-мĕш номерлĕ заводăн работникĕсене наградăлани

Хĕрлĕ Çарăн çапăçури хăватне ӳстерекен хĕçпăшала туса кăларас ĕçе ăнăçлăн хăнăхса алла илнĕшĕн тата Правительство çав хĕçпăшала туса кăларма панă заданисене пурнăçа кăтартуллăн кĕртсе пынăшăн наградăланă:

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе: **Абакумова**—Уралэлектроаппарат заводăн директорне, **Воробьева**—38-мĕш номерлĕ заводăн старши мастерне, унччен «ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе наградăланăскерне; **Карнеева**—38-мĕш номерлĕ заводăн строгальщикне, **Плотникова**—Уралэлектроаппарат заводăн цех мастерне, **Рубинчика**—38-мĕш номерлĕ заводăн директорне, **Хранова**—38-мĕш номерлĕ заводри сборщиксен бригадирне.

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе 12 çынна, «ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» медальпе—10 çынна,

«ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» медальпе—7 çынна наградăланă. (ТАСС).

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Нормăсене ирттерсе тултараççĕ

КАНАШ. Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен уявне — Майăн 1-мĕшне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн вагонсем юсакан заводри рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Киверенко юлташ ертсе пыракан бригада нормăна куллен 200—300 процент тултарма обязательстви илнĕ. Халĕ вăл хăйĕн обязательствине ăнăçлăн пурнăçласа пырать, ĕçре пĕр простой та, пĕр брак та тумасть. Николаевпа Дохленко юлташсен фронтовой бригадисем сменăри заданисене тăтăшах икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Тимĕрçĕ цехĕнчи стахановецсем те хăйсен ĕç тухăçлăхне чылаях ӳстерчĕç. Дюжев тата Толубаев тимĕрçĕсем кашни сменăрах виçшер норма тăваççĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва Канаш деповĕнче ĕçлекенсем те хутшăнчĕç. Паллă слесарь Чеботарев ертсе пыракан бригада вунă кун хушшинче 21 паровоз юсама пулчĕ. Юсанă паровозсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче ĕçлемелле пулаççĕ.

Депо коллективĕ районри колхозсене çуракине хатĕрленме те чылай пулăшать. Ку таранччен вăл колхозсене пурĕ 60 плуг юсаса панă. **П. СЕРГЕЕВ.**

Çĕвĕçсен ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать

ВАРНАР. «Красный Кустарь» артельре çурри ытла хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ, производство планне ытлашшипех тултараççĕ. О. Наумова юлташ кĕпесем çĕлет. Нормăпа икĕ кĕпе çĕлес вырăнне вăл кашни кунах ултă кĕпе çĕлет. Çавăн пекех А. Маскина стахановка та хăйĕн нормине 3 хут ирттерсе тултарать. Артельре чылай рапла ĕçлекен А. Сергеева, М. Петрова, А. Михайлова, О. Карсакова, М. Хакимова тата Чекмарева çĕвĕçсем те пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ.

Ĕçĕн тухăçлăхĕ ӳснипе пĕрлех, пахалăхĕ те лайăхлансах пырать. Иртнĕ çулсенче Акулина Михайлова çĕленĕ япаласене браклани пулкаланă. Кăçал вăл заказсене типтерлĕ пурнăçлать, куллен нормăна 150 процент тултарать.

Артель коллективĕ культурăпа массăллă ĕçсене те манса хăвармасть. Работницăсем ирхине пухăнсан, агитатор А. Софронова юлташ Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа парать. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче çĕнĕ хаçат-журналсем вулаççĕ. Çамрăксем уйăхра икĕ хут «Комсомолец» ятлă стена хаçачĕ кăлараççĕ. Стена хаçатĕнче артельри çĕнтерӳсемпе çитменлĕхсем çинчен çыраççĕ, стахановкăсен ĕç опычĕсемпе паллаштараççĕ.

Цех заведующийĕ комсомолка Чистякова юлташ фронта пулăшас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăвать. Вăл пуçарнипе юлашки икĕ уйăх хушшинче 4 воскресник ирттернĕ. Вĕсенче ĕçлесе илнĕ 6.800 тенкĕ укçана оборона фондне панă.

Артель мартăн 20-мĕш тĕлне 1-мĕш квартал планне 116 процент тултарчĕ. Малта пыракан работницăсем май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсен çак уйăхри заданисене ытлашшипех тултарма пулчĕç. **Н. ЗАХАРОВ.**

Ăмăртăва хутшăнчĕç

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). «Индпошив» мастерской коллективĕ, иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе пырса, кăçал татах та лайăхрах тĕслĕхсем кăтартать. Вăл январь уйăхĕнчи плана 106 процент тултарнă пулсан, февральти плана 120 процент тултарчĕ. Март уйăхĕнчи тĕслĕхсем те япăх мар, коллектив хăйне панă задание кашни кун 120 процентран кая мар тултарса ĕçлет.

Мастерскойри рабочисемпе работницăсем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлса кайнă. Вĕсем, паян тунă ӳсĕмсене çирĕплетсе, ыран татах та ытларах çитĕнӳсем тăвассишĕн, продукцие лайăх пахалăхпа туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Анна Мотова, Циля Липская, Мария Ларина тата Хана Левина мастерсем малта пыраççĕ.

Мастерскойри рабочисемпе работницăсем, халĕ май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, тăватă уйăх планне уявччен 110 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕç. Çак пункт тăрăх вĕсем Улатăрти «Индпошив» мастерской коллективне ăмăртăва чĕнчĕç. **Х. ЛИСИН.**

Пĕрремĕш квартал планне тултарчĕç

КАЛИНИНО. Май уявне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, районри чылай ялсоветĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе лайăхлатрĕç. Юткин юлташ ертсе пыракан Кӳлхĕрри ялсовечĕ 1942 çулти 1-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 172 процент тултарчĕ. Калинино ялсовечĕ те укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлесе пырать. «Майăн пĕррремĕшĕ» колхозри А. Мартынова, А. Степанов, Т. Маслов, «Правда» колхозри К. Филиппов, А. Никитин, Г. Прохоров т. ыт. колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи налога извещени илсенех тӳлесе татрĕç. Кунти финанс агенчĕ И. Архипов юлташ, колхозниксен политикăлла активлăхĕпе усă курса, укçа-тенке вăхăтра пухса пырать. **В. ЗАЙЦЕВ.**

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене тăванла пулăшу парар

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнипе пула, нимĕç оккупанчĕсем хĕвеланăç еннелле чакса пыраççĕ. Вăхăтлăха тăшман аллинче пулнă çĕршер хуласемпе ялсене ирĕке кăларнă, вĕсен çийĕнче каллех Советсен хĕрлĕ ялавĕ ялкăшса тăрать.

Нимĕçсем пулнă пур вырăнсенче те вĕсем хыççăн юнлă йĕр юлать. Хăйсем чакнă чухне вĕсем колхозсен çуртĕсĕрĕсене пĕтерe-пĕтерe тăкаççĕ, тырпулсене юлашки пĕрчĕ юлмиччен турта-турта илеççĕ, вăрлăхсене пăсса хăвараççĕ, лартмалли çĕрулмисене шăнтса яраççĕ. Вăхăтлăха оккупациленĕ районсенчи хресченсем нумайĕшĕ хăйсем вуншар çул тимлĕн ĕçлесе тунă пурлăхсемсĕр тăрса юлчĕç. Нумай ялсенчи колхозниксен хăйсен хуçалăхне çĕнĕрен тума тытăнма лекет.

Гитлерла пусмăртан ирĕке кăларнă колхозсемпе совхозсенче халĕ ĕнтĕ хуçалăха ура çине тăратас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Колхозниксемпе совхозсенчи рабочисем тимлĕн ĕçлесе çуракине хатĕрленеççĕ: фашистсенчен пытарса хăварнă вăрлăхсене пухаççĕ, инвентарьсене тата машинăсене пухса йĕркелеççĕ. Çуракине ăнăçлăн ирттерни хăйсен пулас пурнăçĕн никĕсĕ пулса тăнине вĕсем уççăн ăнланаççĕ.

Çуракине хатĕрленнипе пĕрлех, ирĕке тухнă районсенчи колхозсем нумайĕшĕ обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçе тытăнаççĕ.

Нимĕçсен пусмăрне тӳссе курнă колхозсене Совет правительстви вăйлăн пулăшать. Кунпа пĕрлех, Мускав облаçĕнчи Куровская районĕнчи ялхуçалăх артелĕсем пуçарнипе, ирĕке кăларнă ялсене хĕвелтухăçĕнчи районсем пысăк пулăшу параççĕ.

Çак паха пуçарăва ырласа, эпир, Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем, Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Большевик» колхозсен колхозникĕсем çапла йышăнтăмăр: хĕвеланăç облаçĕсенчи нимĕç фашисчĕсем çаратса пĕтернĕ колхозсене пулăшасси—пирĕн таса тивĕç пулса тăрать. Вĕсене ярса пама Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1016 пăт тĕштырă, 305 пăт çĕрулми, пĕр лаша, мăйракаллă шултра выльăхсем икĕ пуç тата 10 сысна çури уйăрчĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем 750 пăт тĕштырă тата 77 пăт çĕрулми ярса параççĕ. С. Горбунов, Н. Иванов, Т. Григорьев тата ытти колхозниксем хăйсен хуçалăхĕнчен 40-шер килограмм çĕрулми ярса параççĕ.

«Большевик» ялхуçалăх артелĕн членĕсем нимĕçсенчен ирĕке кăларнă районсене ярса пама 531 пăт тырпул тата 30 пăт çĕрулми хатĕрленĕ.

Эпир, Молотов тата Карл Маркс ячĕсемпе тăракан, «Большевик» ялхуçалăх артелĕсен колхозникĕсем, Чăваш республикинчи пур колхозниксене те пирĕн примера йышăнса илме чĕнетпĕр.

Фашистла вăрă-хурахсем çаратса пĕтернĕ хамăрăн тăвансене пулăшăхра хăварар мар! Вĕсем хăйсен уйхирĕсене пĕтĕмĕшпех акса хăварма пултарччăр тесе, вĕсене тăванла, юлташла пулăшу парар! Вăл колхозсене пулăшни—фронта пулăшни пулса тăрать!

Материаллă тата культурăллă паха япаласене çĕмĕрсе тăкни пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен куççулне юхтармасть тата пирĕ хăратса ӳкермест, пачах урăхла, эпир урса кайнă тăшман кӳнĕ сурансене май килнĕ таранах хăвăрт тӳрлетсе хума тăрăшатпăр. Çакна гитлерла бандитсем пĕлсе тăччăр.

ССР Союзĕнчи халăхсем мĕнле тачă пĕтĕçсе тăнине, вĕсем пĕр-пĕрине мĕнле туслăн пурăннине тата пĕр-пĕрне мĕнле пулăшса тăнине гитлерла бандитсем курса тăччăр!

Колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсем хушнипе, чĕнсе калани çине çаксем алă пуснă:

Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан, Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Большевик» ялхуçалăх артелĕсен членĕсем:

А. Петров, Т. Ермолаева, Е. Кириллова, Л. Бродова, А. Данилов, Д. Леонтьев, В. Никитин, Е. Горбунова, А. Никитина, Т. Григорьев, С. Горсундаев, Ф. Пайманов, Е. Димитриев, Р. Волкова, М. Елдрева, С. Нариманова, т. ыт. те.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

тытăннă, çапла вара противникăн «психикăллă» атакине сирсе пăрахнă. Салтăçу хирĕнче тăшманăн 100 яхăн вилли выртса юлнă. Нимĕçсенне 65 винтовка, 15 пулемет, 3 автомат, 13 пистолет, 13.000 ытла патрон тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ тытса илнĕ.

* * *

Калинин фронтĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн танкистсем хăюлăхпа паттăрлăхăн тĕслĕхне кăтартса панă. Г. ялĕ патне нимĕçсен 10 танкĕ çĕмĕрсе кĕнĕ пулнă. Çав ялта хамăрăн танка юсас ĕç пынă. Танкăн экипажĕ — лейтенант Костяков, старши сержант Плиткин, красноармеецсем Глазачев, Иванов тата Бородавка юлташсем, тăшманăн машинисене курсан, вĕсем çине пеме тытăннă. Совет танкĕпе нимĕçсен 10 танкĕ хушшинчи çапăçу нумая пыман: пирĕн паттăрсем тăшманăн виçĕ машинине персе çĕмĕрнĕ, ыттисем васкавлăн çавăрăнса тарнă. П. ялĕ патĕнче тепĕр çапăçура пирĕн виçĕ танк нимĕçсен вăтам танкĕсене — 8 танка пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Егоровпа Файзулин сержантсен зенитнăй орудийĕсен расчечĕсем тĕл персе нимĕçсен «Хейнкел-111» йышши икĕ самолетне тата «Мессершмитт-109» йышши тепĕр самолетне ӳкернĕ. Нимĕçсен виçĕ летчикĕ ӳксе çĕмĕрĕлнĕ. пĕр пилочĕ çĕре парашютпа аннă та ăна тытăнă илнĕ.

* * *

Калинин партизанĕсен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен тылĕнче геройла кĕрешет. Акă вĕсен пилĕк кун хушшинчи боевой ĕçĕсем çинчен кĕскен çырса пынисем:

«**Мартăн 15-мĕш.** Партизансен группи Б. хулинчен С. хулине каякан çул çине минăсем хурса тухрĕ. Нимĕçсен обозĕ, минăсем хурса хăварнă вырăна пырса кĕрсе, сирпĕнсе кайнă, 11 салтак вилнĕ. Çав кунах партизансем, разведкăра çӳренĕ чухне, 7 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Мартăн 16-мĕш. Пирĕн отряд нимĕçсен боеприпассем турттарса пыракан обозне çапса аркатрĕ. 49 нимĕçе пĕтерсе тăкрăмăр тата 6 лава сирпĕнтерсе ятăмăр.

Мартăн 17-мĕш. Тăшманăн тылне фронтпа çыхăнтарса тăракан шоссе çулĕ çинче засада турăмăр. Нимĕçсен колоннине çывăха ярса, пулеметсенчен пеме тытăнтăмăр та, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн пĕтерсе тăкрăмăр.

Мартăн 18-мĕш. Шоссе çулĕ çинче татах засада турăмăр та каллех 25 нимĕçе пĕтерсе тăкрăмăр.

Нимĕçсен командованийĕ пирĕн отряда пĕтерсе тăкма шут тытнă. Мартăн 19-мĕшĕнче тул çутăлас умĕн нимĕçсен 600 ытла салтакĕ, артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн, партизансем çирĕплене ларнă района атакăларĕç. Çапăçу тăватă сехет хушши пычĕ. Хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене 250 çынна çити çухатса хăварса, гитлеровецсем каялла чакрĕç».

* * *

Нимĕçсен 601-мĕш пехотнăй полкĕнчи 3-мĕш ротăн ефрейторĕ Пауль Барловский çапла каласа панă: «Эпĕ çак кунсенче кăна фронта килсе çитрĕм. Малтанхи çапăçурах ротăран тăрса юлтăм та тытăнтăм, вырăссем яла пырса кĕрсен, подвалтан тухрăм та тыткăна парăнтăм. Тылра тăракан резерври чаçсенчи салтаксен шухăш-кăмăлĕ пусăрăнчăк. Вĕсем хăйсене фронта ярассине пиклентсе кĕтсе тăраççĕ. Фронтран нумай йышлă таврăнакан аманнă салтаксем Германи çарĕ Российăра питĕ пысăк çухатусем тӳсни çинчен каласа параççĕ. Фронтри чăн-чăн лару-тăру çинчен халăха пĕлтерес мар тесе, çар влаçĕсемпе полици пур мерăсене те йышăнаççĕ. Санитарнăй эшелон вокзала çитсен, граждăнла халăх аманнисене курма ан пултартăр тесе тата вĕсенчен вăрçăри хăрушă ĕçсем çинчен илтме ан пултартăр тесе, вокзал çуртне салтаксем йĕри-таврах çавăрса илнине эпĕ хам куçпа курнă».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Карл (хушаматне палăртма май килмен) çырнă çырура çапла каланă: «Эпĕ ура пӳрнисене тăм илтерсе ятăм. Ыттисем татах та ытларах сиенленнĕ, нумайăшĕсем пачах çухалчĕç. Сывлăх тĕлĕшпе манăн ĕçсем япăх, тăватă эрне ĕнтĕ эпĕ ревматизмпа асапланатăп. Акă эпĕ 25 çулта кăна, анчах хама старик пекех туятăп, çакăн çинчен шухăшласан пĕтĕм чун-чĕре тарăхать».

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем аманнă красноармеецсене вĕлереççĕ. Ленинград облаçĕнчи Лехово ялĕ патĕнчи вăрманта гитлерла ярсĕрсем аманнă 5 красноармееца, малтан тискеррĕн асаплантарса, персе пăрахнă. Старши лейтенант Буренинăн куçĕсене чиксе шăтарнă тата питне çĕçĕпе касса пĕтернĕ, икĕ красноармеецăн аллисене пăрса лартнă, пӳрнисемпе сăмсисене касса татнă. Виççĕмĕш красноармеецăн урине касса татнă. Пĕр красноармееца телеграф юпи çине çакнă.

* * *

Вырăнта каторгăри пек ĕç условийĕсене кура Германири предприятисенче питех те нумай инкек-синкексем пулаççĕ. Ютçĕршывсенчен илсе килнĕ сахал квалификациллĕ рабочисем хушшинче сиенленнисем уйрăмах нумай. Ганновер çывăхĕнчи автомобильсем тăвакан заводра январьпе февраль уйăхĕсенче инкек пулнипе 93 çын вилнĕ. Чылай рабочисем, уйрăмăнах испанецсемпе французсем, йывăррăн суранланнă.

Çуракине хатĕрленес ĕçре кашни сехетпе туллин усă курмалла

КАЛИНИНО. Районри колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕçĕн хĕрӳллĕ тапхăрĕ пырать. Пасархи куна чылай колхозсенче вăрлăхсене сортласа, машинăсене юсаса çитернĕ, минераллă удобренисем турттарса килнĕ, вырăнти удобренисене пухаççĕ.

Элменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ пулса комсомолец З. Степанов юлташ ĕçлет. Вăл çине тăрса ĕçленине пула колхоз авăн çапассине 1941 çулти декабрĕн 10-мĕш тĕлне тата клевер çапассине декабрĕн 14-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕ, пысăк тухăçлă тыр-пул туса илчĕ.

— Эпир тимлесе ĕçлени колхозниксемпе колхозницăсене культурăллă тата тутă пурăнма пулăшать. Колхоз руководителĕпе бригадирсем мĕнтери тăрăшса ĕçлеççĕ, колхозри ĕçсем çавăн чухлĕ ăнăçлăн пулса пыраççĕ,—тет Степанов юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз халĕ çуракине вăйлăн хатĕрленет. Уя 1250 лав тислĕк кăларнă, 2,8 тонна фосфорит çăнахĕ турттарса килнĕ, 35 центнер кĕл пухнă, 22 плуг, 5 сеялка, 5 пимĕр сӳре тата ытти машинăсемпе инвентарьсене юсаса лартнă. Çуракине пысăк ăнăçлăхпа ирттерме кашни бригадăн ĕç планне турă. Çав плансене колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ.

Çуракинче вăрлăх чи пирвай пулса тăрать. Çавăнпа та кунта вăрлăх фондне 330 центнер тырă хывнă. Вĕсене пĕтĕмпех сортланă, тивĕçлĕ кондицие çитерсе çитерсе çитмелле юрăхлă тунă, вĕсем мĕнле шăтнине тĕрĕсленĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçре бригадир Грачов тата звеньевой К. Михайлов юлташсем уйрăмах тăрăшса, пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Вĕсем ертсе пыракан бригадăпа звено иртнĕ çулта та пысăк тухăçлă тыр-пул туса илнĕ.

Кăçал колхозра турттăм вăйĕ сахалтарах. Иртнĕ çулта кашни лаша çуракинче 2 гектар юхаланă. Кăçал вара 6-шар гектар сухалама лекет. Çавна шута илсе, конюхсем И. Кошкинпа П. Ярсов юлташсем çуракине мăнтăр лашасемпе тухассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ.

«Пĕрлешӳ» колхоз тимĕрçи Е. Никифоров тăватă вăкăр тата пĕр хĕсĕрĕне валли кӳлмелли хатĕрсем тунă. Халĕ кунта çав выльăхсене кӳлме вĕрентеççĕ, вĕсемпе вак-тĕвек ĕçсенче усă кураççĕ.

Çавалкасси Çавалкасри «Çутталла», Алгасинкăри «Чăваш Коммуни», Ямбахтинкăри «Партизан» колхозсем, Хăмăш тата Ачăмçырма ялсовечĕсене кĕрекен колхозсем те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе япăх мар ĕçлеççĕ. Хăмăш ялсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов тата Ачăмçырма ялсовет исполкомĕн председателĕ — район Советĕн депутачĕ Тимофеева юлташсем хăйсен ялсовечĕсенчи колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре куллен пулăшса пыраççĕ, панă порученисене колхоз руководителĕсем мĕнле пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Т. БЕЛОВ.

Кăнтăрти уйхир ĕçĕсем

АШХАБАД, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Туркменире хĕвеллĕ, ăшă çанталăк тăрать. Мургаб айлăмĕнчи колхозниксем вăрăм ярăмлă çĕрмамăкĕ акма тытăннă.

* * *

ЧИМКЕНТ, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Кăнтăр-Казахстан облаçĕнче мартăн 20-мĕш тĕлне 40,642 гектар тулă тата урпа акнă. Фрунзенски, Кзылкумски, Туркестански, Шаульдерски районсем тĕштырă акмалли плана пĕтĕмпех пурнăçланă, халĕ ĕнтĕ çĕрмамăк акмалли çĕр лаптăкне сухалаççĕ тата ирхи çĕртме тăваççĕ.

БУХАРА, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Каршински, Гузарски, Камашински, Кассански тата Бешкентски районсем çурхи ака планне срокченех пурнăçларнă, халĕ вĕсем планран ирттерсе акаççĕ. Облаçра 700 колхоз ытла çĕрулми, пахча-çимĕç лартаççĕ.

Облаçри сад пахчисенче миндальпе урюк чечеке ларнă. Сад-пахчи ĕçĕнче ĕçлекен çынсем пĕлтернĕ тăрăх, кăçал çырла-çимĕçсем пĕлтĕрхинчен икĕ виç хут ытларах пулмалла, уйрăмăнах кăçал миндальпе урюк тухăçлă пулмалла.

Польша правительствин „Шурă кĕнеки“

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 24-мĕш. (ТАСС). Польшăн Нью-Йоркри информаци бюровĕ Польша правительствин «Шурă кĕнекине» пичетлесе кăларнă.

Çав кĕнекере нимĕç оккупанчĕсен Польшăри тискер ĕçĕсене кăтартса паракан документсене пичетленĕ.

Польша правительствин даннăйĕсем тăрăх, Польшăна оккупациленĕренпе нимĕçсен влаçĕсем, пуринчен ытла гестапо агенчĕсем, 84 пин поляка вĕлернĕ. Сăмахран, Люблинра нимĕçсен влаçĕсем 120 çынна тахам нимĕç офицерне тапăннăшăн персе пăрахнă.

«Шурă кĕнекере» нимĕçсен поляк ялĕсене яракан карательнăй экспедицийĕсен ĕçĕсене кăтартса панă. Нимĕçсен влаçĕсем Люблин çывăхĕнчи ялсене карательнăй экспедици янă. Çав экспедицин грузовикĕсем çул çинче пылчăк ăшне кĕрсе ларнă. Нимĕçсем çывăхри пĕр ялтан 11 хресчене хăваласа пынă та вĕсене грузовиксене пылчăк ăшĕнчен кăларттарнă, унтан вара вĕсене персе вĕлернĕ. Кайма тухнă вырăна çитсен, нимĕçсем сакăр ялта мĕнпур арçынсене арестленĕ те персе пăрахнă. Çав экспедици мĕнпурĕ 256 çынна вĕлернĕ, кушута вĕсем вĕлернĕ темиçе ача кĕмесçĕ-ха. Çавăн пек экспедицисем нумай пулнă.

Кĕнекере тата çакна кăтартса панă: тĕрĕс сведенисем тăрăх, çавăн пек преступленисем юлашки вăхăтра татах та нумайланнă. Нимĕçсен влаçĕсем, нимĕçсем хăйсем каланă тăрăх, нумай çынна «йăпанас шутпа çеç» персе вĕлернĕ.

Нимĕçсен специальнăй сучĕсемпе трибуналĕсем тем тĕрлĕ ĕçшĕн те, сăмахран вутă вăрланăшăн та, вĕлермелли приговорсем йышăнаççĕ. Нимĕçсем халăха вĕлернисĕр пуçне тата йышлăн арестленипе хăратса пĕтереççĕ. Тĕрлĕ вăхăтра вĕсем пиншер юристсене, врачсене, учительсене тата пупсене тытса хупнă. Темиçе пин поляка Германин концентрациллĕ лагерĕсене янă.

Нимĕçсем уйрăмăнах хĕрарăмсене питĕ тискеррĕн тыткалаççĕ. Польша правительстви аллинче нимĕçсем темиçе вырăнта хĕрарăмсене ушкăнăн тытса пусмăрлани çинчен ĕнентерсе калакан материалсем пур. Çамрăк поляк хĕрарăмĕсене публичнăй çуртсене «наказани шучĕпе» янине нимĕçсен влаçĕсем хăйсемех те йышăнаççĕ.

Польша правительствин даннăйĕсем тăрăх, нимĕçсем Польшăн Германи çумне çыпăçтарнă районĕсенчен генерал-губернаторствăна 1,5 миллион поляка яхăн вăйпа кăларса янă. Çав кăларса янă поляксем ĕнтĕ, хăйсемпе пĕрле пĕр чемодана чиксе илсе кайма пултарнă пурлăхран пуçне тата 200 злотыйран пуçне, хăйсен мĕнпур пурлăхĕсене пăрахса хăварса çухатнă. Вĕсен, вĕлерессинчен хăраса, мĕнпур пурлăха хăвармалла пулнă. Кăларса янă поляксенчен нумайăшĕ çул çинче сивĕпе шăнса вилнĕ. Çавăн пек вăйпа кăларса янисĕр пуçне, нимĕçсем тата нумай поляк рабочийĕсене Германие илсе кайнă.

Нимĕçсен влаçĕсем поляксен культурин памятникĕсене пĕтерсе тăкаççĕ, çаратаççĕ. Вĕсем искусствăн Польша государствин аллинче тата уйрăм çынсен аллинче тăнă кĕнекисене, алçырăвĕсене тата произведенийĕсене конфискациленĕ. Искусствăна «сыхлас» сăлтавпа нимĕçсем питĕ нумай япала вăрланă. Сăмахран, Краков хулин губернаторĕн арăмĕ Вехтер Краковри нациллĕ музейрен тĕрлĕ япаласене илсе хăйĕн туса хунă. Варшавăра нимĕçсем государствăн тата муниципалитетăн архивĕсене, сеймпа сенатăн библиотекисене, нациллĕ библиотекăн картинисемпе гравюрисене тата алçырăвĕсене илсе кайнă. Познаньпе Померанире вĕсем библиотекăсене тата университета пĕтерсе лартнă. Оккупантсем поляксен памятникĕсене пĕтереççĕ. Вĕсем Познаньре, Лодзьре тата Краковра Костюшко памятникне, Варшавăра — Шопен памятникне çĕмĕрнĕ.

Польшăри мĕнпур университетсене, нумай вăтам шкулсене хупнă пекех, хупнă. Варшавăри коммерчески училищĕре нимĕçсем нимĕç салтакĕсем валли публичнăй çурт туса хунă. Поляк писателĕсен, çав шутрах тата поляксен аслă астрономĕн Коперникăн, произведенийĕсемпе усă курма чарнă. Нумай профессорсене арестленĕ, концентрациллĕ лагерьсене янă.

«Шурă кĕнекере» Польша правительствин çак заявленийĕсем тĕрĕссине кăтартса паракан документсем тата çынсем каланисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Асаплантарса вĕлернисемпе выçса вилнисен хисепĕ 200 пине çитнĕ

Греци правительствин Египетра пурăнакан представителĕсем çапла каласа панă: Грецире 200 пин çынна яхăн выçса, чирлесе вилнĕ, е тата оккупантсем асаплантарса вĕлернĕ.

Греци правительствин пĕр представителĕ шутласа тухнă тăрăх, каплах пулсан вăрçă пĕтиччен Греци çĕршывĕнчи 7 миллион халăхран сахалтан та çурри вилсе пĕтет. (ТАСС).

Иран çинчен калакан элексене мĕнле хатĕрлеççĕ

АНКАРА, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Германин информаци бюровĕ (ДНБ) Иран çинчен саракан провокациллĕ элеке, формально илсен, ДНБ-н Аданри корреспонденчĕ ярса тăрать. Анчах та ДНБ-н Аданра Турци пичечĕн директийĕ çумĕнче шутланакан нимĕнле корреспонденчĕ те çук. Лайăх пĕлсе тăракан çынсем каланă тăрăх, тĕрĕссипе çав тĕлĕнтермĕш телеграммăсене Германин Аданри консулĕ Гофман хатĕрлет, вăл вара вĕсене ДНБ-н телеграммисем пек кăтартса ярать.

Çак вăрçă пуçланиччен Гофман Германин Сирири консульствин ертсе пыракан чиновникĕсенчен пĕри пулса ĕçленĕ. Кунти сведенисем тăрăх, вăл Çывăхри Хĕвелтухăçĕпе Вăтам Хĕвелтухăçĕнче туса ирттернĕ сăтăрла тата диверсиллĕ ĕçсенче, чылай енчен Турцие хирĕç туса пынăскерсенче, активлăн хутшăнса ĕçленĕ. Вăрçă пуçланас умĕн Германин Сирири консульстви Сирире Германирен килнĕ туристсем текен çынсене темиçе пин çын пухнă тата хĕçпăшал запасĕ чылай пухса хунă. Гитлерăн Турцие пĕччен тăратса хăварма шухăшласа хунă ĕмĕтне пурнăçа кĕртмешкĕн Сирире пăлхав тумалли план хатĕрленĕ пулнă. Çав консульствах тата Палестинăри арабсен темиçе йăхне восстани тума хатĕрленĕ тата Иерусалимра «Черная рука» ятлă вăрттăн ĕçлекен общество организациленĕ; çав общество диверсиллĕ темиçе ĕç те тунă, фашистсене хирĕç ĕçлекен пысăк деятельсене вунă çынна яхăн вĕлернĕ. Германин Сирири консульстви çавăн пекех тата Иерусалимăн муфтийĕ пулнă çын араб чĕлхипе кăларса тăнă хаçата укçа парса пулăшса пынă, çав хаçат урлă фашистла лозунгсене сарнă, çавăнтах Турцие хирĕçле статьясем пичетленĕ.

Ютçĕршыв журналисчĕсен сведенийĕсем тăрăх, Аданран тухакан сенсациллĕ телеграммăсене Гофман Германи агенчĕсем, Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчен тухса кайнăскерсем, суйса панă материалсем тăрăх хатĕрлет. Гофманăн Иран çинчен суйса каланă сăмахĕсене Германин агентствисем кăна мар (ДНБ-па Трансоцеан кăна мар) сараççĕ, вĕсене тата Болгарипе Италири хаçатсен корреспонденчĕсем те, çав шутра Болгарире тухакан «Зора» хаçатăн корреспонденчĕсем те сараççĕ, çаксем вĕсем Германи посольствичен шалу илсе тăраççĕ.

Югослави партизанĕсем оккупантсен базисем çине хăюллăн тапăнаççĕ

СТАМБУЛ, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Белградра тухакан хаçатсем Вальево, Горнăй Милановац районĕсенче тата ыттисенче те хаяр çапăçусем тепĕр хут пуçланса кайни çинчен пĕлтереççĕ. Партизансен Вальево округĕнче кĕрешекен пысăк отрячĕ оккупантсене хирĕç çапăçăва çĕрте артиллерипе тата минометсемпе усă курать. Партизансен отрячĕсенчен пĕри, Косово районĕнче кĕрешекенскер, нимĕçсен продовольствипе боеприпассем тиенĕ пысăк обозне тытса илнĕ.

Нимĕçсен тата Недичăн отрячĕсем партизансен базисене тупма тăрăшаççĕ, анчах вĕсене тупаймаççĕ. Поездсем çине тата нимĕçсен уйрăм чаçĕсем çине ăнăçлă тапăннă хыççăн партизансем пĕр йĕр хăвармасăр тарса пытанаççĕ. Нумай пулмасть вĕсем Нишпе Белăй Паланка хушшинчи чугунçул çинчи кĕпере тепĕр хут взрыв туса сирпĕнтерсе янă, çавна пула вара чугунçулăн çав участокĕнче çӳресси 3 куна чарăнса ларнă.

ПРОИЗВОДСТВĂЛЛĂ ПРОФСОЮЗСЕН КОНГРЕСĔСЕН ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ КОНФЕРЕНЦИЙĔ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçатăн корреспонденчĕ Вашингтонран çапла пĕлтерет: унта производствăллă профсоюзсен чрезвычайнăй конференцийĕ уçăлнă. Конференци резолюци йышăннă, çав резолюцире—Рузвельт Пĕрлешӳллĕ Штатсен тĕнĕл держависене хирĕç наступлени тумалла тесе каланине производствăллă профсоюзсем пĕтĕмпех йышăнаççĕ, тесе каланă. Резолюцире тата çапла каланă: тĕнĕл держависене хирĕç халех наступлени тума тата 1942 çулта вĕсене çĕнтерме кирлĕ танксем, самолетсем, орудисем тата суднăсем тумашкăн США-ри рабочисем мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшĕç, тенĕ.

Конференци вырăнсенче производствăллă профсоюзсен конгресĕн тата Америкăри ĕç федерацийĕн представителĕсенчен пĕрлешӳллĕ комитетсем тума каланă. Çав комитетсен задачи— США-н вăрçă тăлĕшпе тăвакан ĕçĕсене пĕтĕмĕшлĕн пулăшса пырасси пулать.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Мартăн 22-мĕшпе 25-мĕшсем хушшинче пулса иртнĕ ĕçсене пăхса тухни).

Юлашки виçĕ кун хушшинче Çĕнĕ Гвинейăпа Австралин çурçĕр çыранĕ районĕнче пысăк ĕçсем пулса иртмен. Апла пулсан та, японецсем çав утрав çинче хăйсем йышăннă вырăнсене малалла çирĕплетсе пыраççĕ тата çĕнĕ вырăнсем йышăнаççĕ. Вĕсем майĕпен кăнтăралла куçаççĕ, çав утравăн кăнтăр çыранне çитесшĕн. Çав вăхăтрах тата японецсем Соломон утравĕсен ушкăнĕнчи Бука утравĕ çине пырса аннă. Японин авиацийĕ Çĕнĕ Гвинейăн кăнтăр çыранĕнчи Морсби хули çине тата Çурçĕр Австралин хулисем çине, çав шутра Дарвин, Уиндхем, Брум тата ыт. хуласем çине те пыра-пыра тапăннă.

Австралия, японецсем Австрали континенчĕ çине пырса кĕрес пулсассăн, вĕсене сирсе пăрахма хатĕрленет. Юлашки вăхăтра Австралие Америкăн чылай йышлă войскисем тата авиацийĕ пырса çитнĕ. Тĕрлĕ портсенче Америкăран пынă пароходсенчен танксем, автомобильсем тата хĕçпăшалсем пушатнă. Австралин оборони хăвăрт çирĕпленсе пырать.

Бирмăра çапăçусем Тоунгу-Пром секторĕнче пулса пынă. Япони войскисем, хăйсен юратнă тактикипе, «сăрхăнса кĕрес» тактикăпа усă курса, çурçĕрелле куçма хăтланаççĕ. Пегю юханшывĕ çинчи çапăçусене юлашки вăхăтра китаецсен Бирмăри войскисем те хутшăннă. Японецсем малалла куçма хăтланнине Китай войскисем флангсене пырса тухнипе сирсе пăрахнă, çапла тунипе пула японецсем чылай пысăк çухатусем тӳснĕ. Японин командованийĕ фронтăн çак участокне пысăк подкрепленисем илсе пынă. Çапăçусем хаяр те пыраççĕ-ха. Икĕ енĕ те пысăк çухатусем тӳсет. Китаецсем хăйсен позицийĕсене çаплах хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Филиппин çинче çапăçусем темиçе районра çĕнĕрен пуçланса кайнă. Лусон утравĕ çинче уйрăм тытăçусем Батаан çурутравĕ çинчи фронтăн пĕтĕм талкăшĕпех пулса пыраççĕ. Япони артиллерийĕ пысăк активлăхпа çапăçать. Вăл Манила заливĕн кăнтăр çыранĕсем çинчи позицисенчен Америкăн Батаан çурутравĕ çинчи тата Манила заливне кĕнĕ çĕрте ларакан пысăках мар Коррендор утравĕ çинчи укреплениĕсем çине персе тăрать. Америка форчĕсем ăна хирĕç персе тăраççĕ. Артиллерирен персе, японецсен 3 самолетне ӳкернĕ. Минданао утравĕ çинче Америкăпа Филиппин войскисем японецсен позицийĕсене темиçе хут та атакăланă. Японин транспортнăй пароходĕсен колоннисене те атакăланă.

Америкăн подводнăй лодкисем, Японин шывĕсенче кĕрешекенскерсем, юлашки кунсенче Японин темиçе сутуилӳ пароходĕпе грузовой пароходĕсене, пĕтĕмĕшпе илсен 20.000 тонна водоизмещение çитекенскерсене, путарнă тата сиенленĕ. (ТАСС).

США-н тинĕс министерстви Японин çухатăвĕсем çинчен пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 22-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви Çĕнĕ Гвинея патĕнче Японин 23 карапне путарни е сиенлени çинчен пĕлтернĕ.

—⊙—

Ютçĕршывсенче

● Венецуэлла правительстви панă распоряжени тăрăх нимĕçсен икĕ пароходне тата итальянецсен пилĕк пароходне конфискациленĕ.

● Рио-де-Жанейрора (Бразилире) тĕнĕл держависене хирĕç протестлесе нумай пин халăхлă демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрантсем итальянецсен аллинче тăракан икĕ çурта çĕмĕрсе пĕтернĕ.

● Уругвай правительстви панă распоряжени тăрăх Уругвайпа Германи, Итали тата Япони хушшинчи телеграф çыхăнăвне пĕтерсе лартнă.

● Англире национальнăй повинноçа пурнăçа кĕртес ĕçе хутшăнтармашкăн 17 çулти хĕрсене шута илсе тухнă.

● «Дейли экспресс» хаçат çырнă тăрăх, Англин авиаци промышленноçĕнче мĕнпур рабочисенчен виççĕмĕш пайне яхăн хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Снарядсем ăшне взрыв тăвакан япаласем тултаракан предприятисенче хĕрарăмсем уйрăмах нумай ĕçлеççĕ. Çавнашкал заводсенчен пĕринче 3.000 рабочирен 30 проценчĕ хĕрарăмсем.

● Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Палестинăна Сирипе тата Турципе çыхăнтаракан чугунçула тума тытăннă.

● Мекнес хулинче (Франци Мароккин Çурçĕр-Хĕвеланăç пайĕнче) тиф чирĕ вăйланса кайнă. Çавăн пекех тата Танжерта та тифпа чирлени темиçе çын пулнă.

● Франци фермерĕсен «хресчен корпорацийĕ» текен обществăна организацилес тĕлĕшпе пулса иртекен пухăвĕнче Францин ялхуçалăх министрĕ сăмах тухса каланă. Министр сăмах каланă кĕске вăхăт хушшинчех çав пухура 40 хресчен выçăхса аптранипе ура çинчен ӳксе ним пĕлми пулса выртнă.

Совет Союзĕ тăрăх

▲ Чудски кӳллĕн пăрĕ çинче нимĕç йытă-рыцарĕсене аркатса тăкнăранпа çитес апрелĕн 5-мĕш кунĕнче 700 çул тулать. Сталинск хулинчи библиотекăсенче çак куна палăртакан историллĕ тата иломлĕ литературăн выставкине организацилеççĕ. Металлургсен культура çуртĕ краеведени музейĕпе пĕрле лекцисем туса ирттерет.

▲ Иваново хулинче колхоз ярмăрки пулса иртнĕ. Ку ярмăркăна Иваново облаçĕнчи 16 районри колхозсемпе колхозниксем хутшăннă. Вĕсем унта 112 тонна çĕрулми, ытти пахча-çимĕçсем, аштакай, сĕт, çăнăх тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене те сутнă. Ярмăркăра колхозниксем валли сутуилӳ организациленĕ, унта куллен кирлĕ таварсем тăвакан промышленноçăн таварĕсене сутнă.

▲ Шахтерсене хăйсем валли çуртсем лартма «Прокопьевоуголь» тата «Сталинуголь» трестсем кредит йĕркипе 400 пин тенкĕ укçа панă. Çурт лартма тухнă расхода çуррине государство хăй çине илет, илнĕ кредитăн тепĕр çуррине çурт хуçисем пилĕк çул хушшинче пайăн-пайăн тӳлесе татаççĕ.

▲ Каахкински районри (Туркмения) Киров ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ çамрăк выльăхсене лайăхрах тăрантарма колхозниксене укçа парса пулăшас шутпа 150 пин тенкĕ уйăрса хунă. Çакă вăл обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепне ӳстерес ĕçе вăйлăн пулăшмалла.

▲ Уралри горпромкомбинатăн çĕнĕ цехĕ ĕçлеме пуçланă. Ку цех хуçалăхра кирлĕ супăнь туса кăларать. Кăçалхи çул цех сахалтан та темиçе вуншар тонна супăнь парать.

Çĕнĕ кĕнекесем

Н. Щедрин. — Суйласа илнĕ произведенисем. — Чăвашгосиздат, 1941 çул, 388 стр., тиражĕ 15.000 экз., хакĕ переплетпа — 7 тенкĕ.

Çак кĕнекене вырăссен паллă сатирик-писателĕн: 1) Халлапĕсене, 2) «Головлев господасем» тата 3) «Глупов хули историйĕ» текен паллă произведенийĕсене кĕртнĕ. Асăннă произведенисене пурне те тулли мар вăтам тата вăтам шкулсенчи ачасене вĕрентеççĕ. Кĕнекене вырăсла кăларнă.

Фашизма хирĕç фольклор. — Чăвашгосиздат, 1942 çул, 106 стр., тиражĕ 3000 экз., хакĕ 3 тенкĕ.

Совет халăхĕ урнă фашизма хирĕç хĕçпăшалпа тăрса кăна мар, хăйĕн литературăллă творчествипе те хаяррăн кĕрешет. Халăх творчестви— фольклор тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре боевой хĕçпăшал пекех кирлĕ пулса тăрать.

Халăх çĕнĕ такмаксем, халапсем, пословицăсем, юрăсем çуратать.

Пирĕн отечественнăй аслă вăрçă хамăр тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварассипе, Ленинпа Сталин туса панă телейлĕ те ирĕклĕ çĕршывăн кун-çулĕпе пырать. Чăнлăхпа тĕрĕс ĕçе нимĕнле тăшман та парăнтарма пултараймасть. Чăваш халăхĕн аталанса пыракан фольклорĕнче те эпир çак шухăш-кăмăлах куратпăр.

Пирĕн чăваш халăхĕ те фашизма питлекен хаяр фольклор çуратрĕ. Çак фольклорта халăхăн таса та çутă ĕмĕчĕ, иксĕлми шанчăкĕ палăрса тăраççĕ. Асăннă кĕнекене чăваш халăхĕ халхи вăхăтра фашизма хирĕç хайракан сивĕчлетнĕ сăвă-юрăсене, халлап-юмахсене, пословицăсене тата ыттисене те пухса кĕртнĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Коллектив работников Чебоксарской конторы связи выражает соболезнование Марии Андреевне Власовой по поводу преждевременной смерти ее мужа, помощника начальника конторы связи

ИВАНА ТИМОФЕЕВИЧА ВЛАСОВА.

Похороны состоятся 27 марта. Вынос тела из Дома Связи

Коллектив сотрудников Дорожного Управления при Совнаркоме Чувашской АССР с глубокой скорбью извещает о преждевременной смерти после непродолжительной болезни бывшего начальника Чувашдорснаба

КОЧЕРГИНА, ВИКТОРА АЛЕКСАНДРОВИЧА,

последовавшей 25 марта 1942 года, и выражает соболезнование жене и родственникам покойного.

Коллектив сотрудников Управления дороги с глубокой скорбью извещает о преждевременной смерти после непродолжительной болезни руководителя лесной группы

КОЧЕРГИНА, ВИКТОРА АЛЕКСАНДРОВИЧА,

последовавшей 25 марта 1942 года, и выражает соболезнование жене и родственникам покойного.

ĂЙĂР ÇУХАЛНĂ,

2 çулта, тĕсĕ - хура.

Пĕлекенсем çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чăваш АССР, Красноармейски район, Красноармейски ялĕ, „Победа“ колхозăн правленине.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—39, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 702 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64.